ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6 +

23 (4489) №, 2016, июнь (çĕртме), 16
1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802

ПИРĔН ТĂРĂХРИ ЯЛТА

## Çуткасси, Мăчкаш... Эпир пурте хурăнташ



**Етĕрне районĕнчи Çуткасси ялĕ... 345 çул тултарчĕ вăл. Çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче кунта 100 кил шутланнă, вĕсенче 517 çын пурăннă. Унтанпа шыв-шур нумай юхнă. Чылай улшăну пулса иртнĕ. Паян вара 62 хуçалăхра – 138 çын.**

Ачасем вара Кăкшăм шкулне вĕренме çӳреççĕ. Вĕсемех ялти аваллă çынсем пирки сочинени çыраççĕ, аслисемпе мăнаçланаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче ку ялтан 99 вăйпитти фронта тухса кайнă, 40-шĕ нимĕçсемпе паттăррăн çапăçса вилнĕ. 59-шĕ вара Çĕнтерĕве тĕрлĕ хулара кĕтсе илнĕ, тăван тăрăха таврăнса тăван-пĕтенне савăнтарнă. Паттăрсене халалласа палăк та çĕкленнĕ Çуткассинче. Ăна та тирпейлĕ пăхса тăраççĕ вĕренекенсемпе аслисем.

Çак ялта пурăнакансем – ашшĕ-амăшĕ, ачи-пăчи, ватти-вĕтти – хăйне евĕрлĕ. Çут çанталăка юратса унпа киленме пĕлекенсем, тарăн туйăмсисĕмлĕ, ырă та çемçе чунлă çынсем. Вĕсемшĕн хĕвелĕ те ăшăрах кунта, çилĕ те çепĕçрех, ачашрах.

«Унччен пурăннă халăх та ку çĕр çинче тулли кăмăлпа утса çӳренĕ. Акă, сăмахран, пирĕн юратнă Чăваш халăх писателĕ Леонид Агаков та ыттисемпе пĕрле савăннă, юрланă, ĕçленĕ. Вăл та хăйĕн чун илемĕпе, ăшшипе хитрелетнĕ тавралăха... Çавăнпа эпир те, Кăкшăм шкулĕн сывлăхпа кану лагерьне çӳрекенсем, ял уявĕнче халăха юрă-ташăпа савăнтартăмăр. Татах та татах чунчĕрене тивмелле илемлĕ юрă çĕкленчĕ. Çырма кукăрĕсемпе шырлансене çапăнса, анаталла юхрĕ... Пирĕнпе пĕрлех кайăксем хĕпĕртерĕç. Тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăк. Пĕр-пĕрне чĕнсе канăçлăн юрларĕç. Çакă сарă кун, вăрман, уй-хир уçлăхĕ, хаваслантарса та çĕклентерсе, ырă тĕлĕке аса илтерчĕ. Каçăхтарса яракан илемлĕх хуçаланчĕ-çке çав самантра! Хула сывлăшĕ хыççăн çакăн пек илĕртекен вырăнпа, тăван кĕтеспе, утма мĕн тери кăмăллă пулчĕ аякран çитнĕ хăнасене. Асра юлмалла иртрĕ уяв. Пурин кăмăлне те кайрĕ хаваслă праçник.

Савнă ялăм, Çуткасси,
Сăрт çинче ларать.
Мăчкаш шывĕ илĕртсе
Хумне вылятать...

Çак сăвă йĕркисем те чуна çывăх мар-и-ха? Çапах та пире çак тĕлĕнмелле куна мăн асаттесемпе асаннесем, кукаçисемпе кукамайсем парнеленĕ. Вĕсем ирсĕр нимĕçе çапса аркатмантăк – паянхи илемлĕ пурнăçа курман та пулăттăмăр. Лагерьте те канса савăнаймастăмăр. Çавăнпа та пирĕн паттăр салтаксене яланах асра тытмалла, вĕсемпе мухтанмалла, мăнаçланмалла, – терĕç шкул ачисем хăйсен ялĕ, тавралăхĕ пирки ыррине çеç каласа.

***Элиза ВАЛАНС.***

Етĕрне районĕ,
Кăкшăм.

➲➲➲ 5-мĕш стр.

**Çырăнтару – 2016**

**Кашни килте «Хыпар», «Хыпар-эрнекун» хаçатсем пулмаллах! Ачăрсен, мăнукăрсен вара — «Тантăш» хаçатпа, «Тетте», «Самант» журналсем. Çырăнтару вĕçленичченшутлă кунсем юлчĕç!**

*«Хыпара» 736,02 тенкĕпе,*
*«Хыпар-эрнекуна» 338,34 тенкĕпе,*
*«Тантăша» 261,84 тенкĕпе,*
*«Тетте» журнала 145,20 тенкĕпе,*
*«Самант» журнала 182,94 тенкĕпе*
*кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ*

МĂН КАНАШ УМĔН

# Чĕлхешĕн кар тăрасчĕ



Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн черетлĕ ларăвĕнче Ĕç çыннин çулталăкĕнче чăвашлăха аталантарассипе тухăçлă ĕçленине палăртрĕç.

Комитетра республикăри хуласемпе ялсен чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен ассоциацийĕсемпе тата вĕренӳ институчĕн чĕлхе кафедрипе тачă çыхăнса ĕçленине палăртрĕ. Шупашкар, Йĕпреç, Муркаш, Çĕрпӳ районĕсен тата Çĕнĕ Шупашкар хулин чăваш чĕлхипе литератури учителĕсем лайăх йĕркеленине пĕлтерчĕç.

Вĕренӳ комитечĕн ĕçĕ-хĕлĕн чи курăмлă мероприятийĕсенчен пĕри – çамрăк çыравçăсемпе ӳнерçисен «Çĕнĕ хум» пултарулăх конкурсĕ. Унта республикăри 16 районпа тăватă хуларан пурĕ 117 ача хутшăннă. Г.Л.Никифоров чи лайăх хайлав автор-çĕнтерӳçисен чыславне çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче ирттерессине пĕлтерчĕ. «Чăвашлăха аталантаракан чи лайăх шкул» конкурсăн пĕрремĕш тапхăрĕ районсемпе хуласенче вĕçленнĕ иккен. Халĕ вĕренӳ управленийĕсем район, хула шайĕнчи çĕнтерӳçĕсене рес-публика ăмăртăвне хатĕрлеме пуçăннă. Республика конкурсĕн иккĕмĕш тапхăрĕ авăн-чӳк уйăхĕсенче иртет.

Çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» калакан саккуна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен» ыйтупа конгресăн Мăн Канашĕ иртмелле. Пухăннисем проект шучĕпе чăваш чĕлхин пахалăхĕпе пĕлтерĕшне шкул вĕрентĕвĕнче тата пурнăçра ӳстерме пулăшакан кирлĕ сĕнӳсем пачĕç.

«Эпĕ туса пĕтерейменнĕ ĕçсене эсир туса пĕтерĕр», – тенĕ Иван Яковлевич Яковлев. Чăвашлăхшăн пурин те кар тăрса тăрăшсассăн кăна чĕлхемĕр пĕлтерĕшĕпе сумĕ ӳсме пултарĕ.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн ертӳçи.***

ÇУ КУНĔСЕМ

# Эпир кăмăллă яланах!

Кĕçĕннисен ушкăнне çӳрекенсем кăна мар, ача сачĕн мĕнпур пепки паянхи куна ытти чухнехи пекех хаваслă ирттерчĕç. Тĕрлĕ вăйă вылярĕç, çĕнĕ юрă вĕренчĕç, садикрен инçех мар вырнаçнă катара пулса нумай курăк-чечекпе паллашрĕç... Кашни саманта каласа та пĕтереймĕн. Çав самантсем вара пурин асĕнче юлчĕç. Çавăнпах ĕнтĕ пепкесем: «Пире «Золушка» садикре питĕ килĕшет!» – теççĕ час-часах.

Чăннипех те хаваслă кунта. Ачасен ашшĕ-амăшĕ ĕçре чухне хăйсене лăпкă тытма пултарать – вĕсен пепкисем шанчăклă вырăнта. Ялти «Золушка» садик пурне те килĕшет. Унти воспитательсемпе няньăсем те ырă кăмăллă та маттур. Халĕ те акă вĕсем уçă сывлăша тухнă та пĕр-пĕринпе шăкăлтатса калаçаççĕ. Кĕçех хăйсем юратакан «Тетте» журнала алла илчĕç те унти юмахсемпе паллашрĕç, тĕрлĕ вăйă ытамне лекрĕç. Журнал килĕшнĕренех ăна кашни çырăнса илме тăрăшать.

«Эпир хаваслă яланах!» – теççĕ маттур та савăнăçлă пит-куçлă хĕрачасемпе арçын ачасем.

***Владимир ЛЕОНИДОВ.***

Муркаш районĕ,
Оринин.

**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** «Пирĕн алăра – «Тетте» журналăн çĕнĕ кĕларăмĕ!» – теççĕ ачасем.



# Шупашкар кун-çулне пĕлетĕр-и?

Славян çырулăхĕпе культурин кунĕ умĕн студентсен икĕ ушкăнĕ Шупашкар 550 çул тултарнине халалланă «Свет разумения книжного» уява хастар хутшăнчĕ. Çамрăксене вырăс чĕлхи вĕрентекен Е.Ю.Беляевăпа С.Н.Шихранова ертсе пычĕç.

Мероприятире Чăваш наци библиотекипе Шупашкар хули музейĕ ирттернĕ «Вопросы древности – ответы современности» ăс-хакăл марафонне пĕтĕмлетрĕç. Марафон дистанцийĕнче пурĕ 43 çамрăк тата «Çамрăк историксем» ушкăн /Шупашкарти 44-мĕш лицей/ тупăшнă. Пирĕн техникум студенчĕсем те унта хастарлăхпа палăрчĕç. Родион Бочкарев «Матрица памяти» номинацире – 1-мĕш, Михаил Петров «Территория интеллекта» 2-мĕш вырăнсем çĕнсе илчĕç.

Ăс-хакăл конкурсĕ уявра тăсăлчĕ. Шупашкарти 57-мĕш шкулпа 44-мĕш лицей тата пирĕн техникум студенчĕсем тĕп хуламăр историне пĕлессинче тупăшрĕç.

Çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе, парнесемпе чысларĕç.

***Дмитрий ГУРЬЕВ, Александр АНДРЕЕВ,***
***«Çамрăк журналист» кружок членĕсем.***
***Шупашкарти транспортпа строительство технологийĕсен техникумĕ.***

# Музейра



Энтриялĕнчи пуçламăш шкулта ача нумай мар. Вĕренекенсем учительсем ертсе пынипе каникула усăллă ирттерме тăрăшаççĕ. Акă, анчахрах хăйсен ентешĕ А.Вишневский çырнă «Энтрияль ялĕ тата унăн çыннисем» кĕнекепе паллашрĕç те ыйту-хурав мелĕпе конференци ирттерчĕç. Çапла майпа тăван ялĕ пирки кашниех нумай çĕннине пĕлчĕ.

1-мĕшпе 3-мĕш классенче вĕренекенсене район музейне кайса курас шухăш та тахçанах канăç памастчĕ. Тинех ĕмĕт пурнăçланчĕ. Акă вăл – тавра пĕлӳ музейĕ! Ачасем кунта нумай кăсăк япала курчĕç, çĕнĕ хыпарсем илтрĕç. Уйрăмах пушарнăйсене халалланă кĕтес пурне те тыткăнларĕ. 1891 çултах ăсталаса кăларнă насус-помпа халĕ те вут-çулăма сӳнтерме юрăхлă пулни вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Вăрмар тăрăхĕнчен нумайăшĕ пожарнăй ĕçне суйланă. Энĕшпуç ялĕнченех ак, пурте лайăх пĕлекен Василий Нягин полковник Паттăрлăх орденне икĕ хутчен тивĕçнĕ. Марафон инçĕшне чупнă Светлана Захарова паллă спортсменка та вĕсен ретĕнченех иккен. Вĕренекенсем вут-çулăма сӳнтерекенсен сăнӳкерчĕкĕсемпе интересленсех паллашрĕç.

Çулçӳрев пурне те килĕшрĕ.

***Василий ЦЫФАРКИН.***

Вăрмар районĕ.

**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** Музей залĕнче.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1176 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2062
Пичете çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

*Ача-пăчана çĕнĕ кĕнекере чи малтанах мĕн илĕртет-ха? Паллах, ӳкерчĕксем! Çутă та хĕвеллĕ тĕссем, ырă та хаваслă сăнарсем туххăмрах илемлĕх тĕнчине ертсе кĕреççĕ. Хитре ӳкерчĕксемлĕ кĕнекене алла тытас, уçса пăхас килет. Йăлт тишкерсе тухсан тин унти юмах-калавпа е сăвăсемпе паллашма кăмăл тăвать шăпăрлан. Ара, илемлĕ ӳкерчĕксем ачана кăсăклантарса янă. Хайлавсенче мĕн çинчен сăмах пынине пĕлес килет халĕ унăн.*

# Чечек пек илемлĕ «Сарă лĕпĕш»



Çакăн пек ытармалла мар чипер кăларăмсенчен пĕри – нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче кун çути курнă «Сарă лĕпĕш. Золотой мотылек» /тиражĕ – 1000 экземпляр/. Унăн авторĕ – Зоя Сывлăмпи сăвăç. Кĕнеке /редакторĕ – Валерий Алексеев, ӳнерçи – Светлана Бритвина/ икĕ чĕлхепе тухнă. Поэтессăн сăввисене вырăсла куçараканĕ – Людмила Симонова.

Кĕнекери ӳкерчĕксем чăннипех те тыткăна илеççĕ. Хуплашкине тинкерер-ха: хитре кĕпе тăхăннă кăвак куçлă хĕрача сарă лĕпĕш çине куç илми пăхать. Ун тавра кăвак утмăлтурат çеçкисем çилпе хумханса лараççĕ. Чечексем çинче унта та кунта лĕпĕшсем куратпăр. Кашниех хăйне евĕр илемлĕ, ыттисенчен уйрăлса тăрать. Анчах сарă лĕпĕш пуринчен те хӳхĕмрех. Ăна тӳрех асăрхатăн. Çак шухăша сăвă йĕркисем те çирĕплетеççĕ:

Хăй те ав – чăн-чăн чечек!
Хĕвел евĕр сар кĕпеллĕ,
Илĕртӳллĕ те чечен!

Çавăнпа-тăр хĕрача та хĕпĕртӳллĕ, ăшă куçпа пăхать сарă лĕпĕш çине.

Чылай сăвăри лирика геройĕсем – ачасем. Вĕсем хамăр хушăрах, маттурскерсене пурте пĕлеççĕ, паллаççĕ. Акă «Хитре пукане» сăвăри хĕрача Настук ятлă пуканипе выляма юратать, ăна лăпкаса çывăрма вырттарать. «Ярăнасшăн мар» сăвăри арçын ача ашшĕ-амăшĕ парнеленĕ кăвак машинăпа «чун килениччен» ярăнать. Мухтар ятлă йытти кăна темшĕн-çке унпа пĕрле ярăнасшăн мар. Микула /«Пĕчĕк шăллăм»/ вара юрра-ташша кăмăллать. Вăл ташланă чух çемйипех «сиккелеççĕ мĕн ываниччен»...

Ачасем вăйă-кулăра кăна мар, ĕçре те хастар. Пĕчĕк Улине /«Тăрăшни аван»/ амăшне уйран уçласа пулăшма шутлать. Шел те, уйран çӳпçи ӳпĕнсе каять. Куншăн пăшăрханмалла-и? Çук паллах. Хĕрача ĕç çумне çыпçăнни, аслисен ырă тĕслĕхне ăша хывни темрен те пахарах.

Тăрăшсассăн – килĕ ăнăçу,
Çӳпçере те пулĕ сарă çу... –

Пĕтĕмлетет сăвăç. «Аппăшĕпе йăмăкĕ» сăвăри хĕрачасем те вăр-вар, çаврăнăçуллă, мĕнпур ĕçе пĕрле пурнăçлаççĕ.

Кашни сăвă – уйрăм ӳкерчĕк, пулăм. Художник хайлаври ĕçпуçа куç умне кăларса тăратмалла, питĕ чĕрĕ сăнлама пĕлет. Страницăсене уçнă май ӳкерчĕксен илемĕпе киленетĕн, савăнатăн. Тепĕр чухне кулмасăр та чăтаймастăн. Акă урамри лачакара сысна çури йăванать /«Сысна çури»/. Иван ăна аса вĕрентесшĕн:

– Юратма тирпейлĕхе
/Каланишĕн ан кӳрен/, –
Терĕ, – пĕчĕкрен вĕрен.
Пĕл: кахал пулма ансат...
Хырăмна кайса тасат.
Намăс мар-и-ха сана
Урамра йăваланма?

Чăвашла пĕлмен ачасем сăвăсен вырăсла куçарăвĕпе паллашма пултараççĕ. Чи маттуррисем вара «Икĕ чĕлхе – икĕ ăс» каларăша çирĕплетсе чăвашла та, вырăсла та вуласа хайлавсене танлаштарайĕç. Хальлĕхе сас паллисене çеç паллакан шăпăрлана та кăсăклантарĕ «Сарă лĕпĕш». Çĕнĕ кăларăмри ӳкерчĕксем вĕсене килĕшессе шансах тăратпăр.

ШУХĂШЛАР-ХА

# Кая юлсан каю шăтать

«Ашшĕ-амăшĕ ачисен юнтармăшĕсене тивĕçтерсе тата пĕчĕклех иртĕхтерсе вĕсенчи çут çанталăк панă пултарулăха пăчлантараççĕ, кайран вара хăйсемех наркăмăшлатнă çăлкуç шывĕ йӳçек тутă каланинчен тĕлĕнеççĕ», – тенĕ Джон Локх акăлчан педагогĕ тата философĕ. Паллах, юратнă ывăл-хĕре ачашлас, хитре тумлантарас, тутлă çитерес килет. Анчах воспитани парасси çак ыйтусене тивĕçтернипе çеç вĕçленмест-çке. Йывăрлăхра ăшă сăмахпа йăпатнине, чуна уçса калаçнине, тăван тĕпренчĕке мĕн хумхантарнипе кăсăкланнине нимĕн те çитеймĕ. Ачасем çитĕнеççĕ, ырă самантсем вара ĕмĕрлĕхех асра юлаççĕ.

Аслисем çамрăк ăрăва хурланине часчасах илтме пулать. Яш-кĕрĕм наян, ĕç тĕлне пĕлмест, хушнине итлемест иккен. Вĕсене сив сăмахпа хăртиччен кăшт шухăша путма хистес килет. Çамрăксене ятласа хăйсен ятнех ямаççĕ-ши çитĕннисем? Айăплав чулне хăйсен пахчинех ывăтмаççĕ-ши? Ывăл-хĕр чи малтанах çемьери тĕслĕхе курса йăлт ăша хывать. Кулленхи ĕçсемпе сăмахсем мĕнле витĕм кӳресси – пархатарлă хунав ярасси е ача чунне амантасси – килти ларутăруран чылай килет.

Курăмлă тĕслĕх çеç илсе паратăп. Пĕррехинче пĕлĕшĕм кĕнеке лавккине кĕнĕ. Магазинта чăн-чăн вулав уявĕ йĕркеленĕ-мĕн. Паллă çыравçă вулакансене хăйĕн кăларăмĕсемпе паллаштарнă, çавăнтах вĕсене алă пусса панă. Пурте калаçнă, ыйту панă, туяннă... Хаваслă тĕркешӳ-çуйхашу вăхăтĕнче лавккана амăшĕпе пĕчĕк ывăлĕ çитсе кĕнĕ. Арçын ача илемлĕ ӳкерчĕклĕ кĕнекесемпе кăсăкланнă, пĕрне туянса пама ыйтнă. Анчах амăшĕ шат та пат хирĕçленĕ, ачана аллинчен çавăтнă та алăк енне васканă...

Хăшĕ-пĕри: «Хальхи вăхăтра кĕнекесем хаклă. Хĕрарăма ăнланма та пулать», – тейĕ. Çак шухăша хӳтĕлекенсене çирĕплетсех калама пултаратăп: ача тилмĕрсе ыйтакан кĕнекен хакĕ – вунă тенкĕ... Шăпăрлан чаплă та хаклă тетте туянса пама йăлăнман-çке. Унăн кĕнеке çеç вулас килнĕ. Ача ыйтăвне тивĕçтерни ăна иртĕхтерни пулмĕччĕ ку лару-тăрура.

Эпир вара, аслисем, кĕçĕннисен туртăмне вĕсем пĕчĕк чухне асăрхамастпăр та кайран нăйкăшатпăр. «Ах, ывăлăм /е хĕрĕм/ пачах та вуласшăн мар-çке. Темле вĕрентмелле ăна библиотекăна çӳреме, кĕнекепе туслашма», – теççĕ пăшăрханса амăшĕсем. Хуравĕ ансат: çитĕннисен хăйсен тĕслĕх кăтартмалла, тĕпренчĕкĕсен пултарулăхне пĕчĕкрен аталантармалла. «Кая юлсан каю шăтать», – тенине манас марччĕ.

ЫТАРЛĂН

*Варнава (САНИН) манах*

## Акапуç тата трактор

Çĕнĕ трактор уйра кивĕ акапуçа курнă та тăрăхласа кулма пикеннĕ:

– Сана, мĕн, хире музейрен илсе килнĕ-им? Эс кунта хăвăн лашупа ĕмĕр ĕçлĕн ĕнтĕ! Эпĕ вара пĕр сехетре сухаласа пăрахăп! Манра, пĕлетĕн-и, миçе лаша вăйĕ?!

– Эппин, мĕншĕн сухаламастăн-ха эсĕ?

– Ара, çунтармалли-сĕрмелли материал турттарса килесси кĕтетĕп!

– Э, ну, кĕт-кĕт! – чĕриклетнĕ те ĕçе пуçăннă кивĕ акапуç.

Кун каçиччен, трактор кĕтсе ларнă хушăра, пĕр лаша вăйĕпе пĕтĕм хире сухаласа тăкнă вара...

## Тĕлĕнтермĕш

Пĕр çыннăн шутсăрах тĕлĕнтермĕш курас килнĕ. Питĕ-питĕ курас килнипе вăрăм та хăрушă çулçӳревех тухса утнă.

Ăçта кăна пулман вăл! Шывсăр пушхирте тата çиллĕ-тăвăллă тинĕсре, вăрăхурахсем патĕнче тыткăнра тата вăраннă вулкан тăрринче. Пĕррехинче чутах арăслан çăварне çакланман, анчах пĕр тĕлĕнтермĕш те, чи пĕчĕккине те пулин, курман.



Нимсĕрех киле тавраннă вара.

Тăван киле ура ярса пуснă кăна, тавралла çаврăнса пăхса çапла калană:

– Эпĕ чĕрĕ-сывă тавранни – чăн-чăн тĕлĕнтермĕш!..

Каланă та ахлатнă. Мĕншĕн тесен тĕлĕнтермĕшсем хамăр таврах пулнине сасартăк ăнланса илнĕ.

Анчах эпир вĕсене темшĕн асăрхамастпăр-çке...

*Вырăсларан Ольга ИВАНОВА куçарнă.*

*Страницăна Ольга АВСТРИЙСКАЯ хатĕрленĕ.*

# Юрла-юрла хатĕрленĕ апат тутлă



**Тăваттăмĕш класран вĕренсе тухнă Гена Пальмов маттур ача пулни юрă-кĕвĕре тата спортра палăрать. Вăл – шкулти хорта лайăх юрлакансенчен пĕри. Кашни мероприятире Гена хăйĕн янравлă сассипе илемлĕ юрăсем шăрантарса куракансене савăнтарать.**

– Юрланă чухне манăн кăмăл çĕкленет, – тет хаваслăскер йăл кулса.

Çак пултарулăх ăна амăшĕнчен, Ирина Николаевнăран куçнă ĕнтĕ ахăртнех. Ара, вăл та юрлама ăста-çке. Гена вара хăйне куçнă таланта аталантарсах пырать, конкурссене хутшăнса палăрать. Вăл районта иртнĕ «Канаш ен мерченĕсем» тупăшура пĕччен юрласа пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Пысăк çитĕнӳ тăвасси пĕчĕк утăмсенчен пуçланать вĕт. Малашне арçын ача республика конкурсĕсене те хутшăнас тĕллевлĕ-ха. Ăнăçу хăйĕнпе пуласси вара ĕненет вăл.

Пĕлӳ тĕнчинче çирĕп утăмпа пыраканскер, пултарулăхра та палăраканскер иртнĕ вĕренӳ çулĕнче класс старостин тивĕçĕсене пурнăçланă. Тантăшĕсем унпа канашлаççĕ, ăна тимлĕн итлеççĕ. Гена вĕсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнчех. Çакă пурне те яланах пĕр-пĕриншĕн кар тăма, туслă пулма хистет. Ахальтен мар ĕнтĕ туслă йыш шкулти спорт ăмăртăвĕсенче те малти вырăнсене тăтăшах çĕнсе илет. Пĕр чăмăр пулса çĕнтерме ăнтăлни пулăшса пырать вĕсене.

Гена хăй те спортпа туслă. Футболла тата хоккейла ăста вылять, хăвăрт чупать. Пиллĕкмĕш класа çӳреме тытăнасса вăл чăтăмсăррăн кĕтет. Сăлтавĕ мĕнре тетĕр-и? Ара, ун чухне ăна та «Зарница» çарпа спорт вăййисене хутшăнтараççĕ-çке. Кун пирки арçын ача тахçанах ĕмĕтленет те ĕнтĕ.

Спорт тусĕ пушă вăхăтне те спортзалта ирттерет тетĕр-и? Çук иккен. Ирĕклĕ самантра Гена фантастика хайлавĕсем, хаçат-журнал вуласа тишкерет.

– Эпĕ чĕрчунсемпе те выляма кăмăллатăп. Килти йытăпа тата кушакпа чылай вăхăт иртгеретĕп, апат çитеретĕп вĕсене. Пĕлтĕр класс ертӳçи Галина Николаевна Никитина шкула тимĕр шапа илсе килнĕччĕ. Эх, пуçланчĕ вара пирĕншĕн савăнăç! Кашни тăхтавра ун патне пыратпăр. Тĕлĕнмелле чĕрчун вăл. Пирĕн класра ятарлă аквариумра пурăнать. Эпир ăна апатлантаратпăр, ачашлатпăр, – хăпартланса каласа парĕ Гена.

Кашни ача ĕмĕт-тĕллевпе пурăнать. Гена та юрăç е выльăх тухтăрĕ пулма ĕмĕтленĕччĕ пĕр вăхăт. Кăштахран шухăш каллех улшăннă иккен. Халь вăл: «Повап пулатăп!» – тет. Чун туртнине пурнăçламашкăн вăл аппăшĕпе амăшне кашнинчех апат пĕçерме пулăшать. Хăй тĕллĕн те тĕрлĕ çимĕç янтăлать.

– Уйрăмах манăн пăрçа яшки тата çатмара хатĕрленĕ шаркку ăнăçлă пулать. Килтисем те мухтаса сăйланаççĕ. Мана вара çакă çеç кирлĕ – питĕ хĕпĕртетĕпçке ăшă сăмахсемшĕн! – терĕ маттурскер.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Канаш районĕ,
Шуркасси шкулĕ.

# Тăрăшулăх кирлех



Тăххăрмĕш класран Лена Гурьянова отличница пулса вĕренсе тухрĕ. Сăпайлă та тăрăшуллăскер чылай предмет олимпиадинче палăрать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче вăл тĕнчери ӳнер культури дисциплинăпа республикăри ăмăртуран 2-мĕш вырăн йышăнса таврăннă. Ӳнер жанрĕсем пирки, юрă-ташăпа тата кинематографипе çыхăннă чылай ыйтăва хуравласа пысăк балсене тивĕçнĕ вăл. Çавăн пекех ӳкерчĕксен авторĕсене тĕрĕс каласа та тупăннă. Ку предметпа олимпиада малтан районта иртнĕ, Лена унта 1-мĕш вырăна тухнă хыççăн çӳллĕрех шайра та хăйне тĕрĕслесе пăхма шут тытнă. Ăнтăлу çитĕнӳ патне çитеретех çав.

Вĕренӳре çеç мар, спортра та хастар Лена. Вăл шахматла выляма ăста. Çиччĕмĕш класранах вăл районта спорт маçтарĕн кандидачĕ. Шахмат вăййине хĕрачана ашшĕ выляма вĕрентнĕ-мĕн. Ăсталăхне çителĕклех туптасан Лена ăмăртусене те хутшăнма тытăннă. Республикăра хăйĕн ӳсĕмĕнчи çамрăксен хушшинче икĕ хутчен пĕрремĕш вырăна тухнă маттурскер.

– Юлашки вăхăтра пиччепе самолет моделĕсене тишкерме, тĕпчеме пуçларăм. Вăл унпа тахçанах кăсăкланать ĕнтĕ. Малтан пушă вăхăтра тĕрĕ тĕрлеме кăмăллаттăмччĕ, халĕ кĕнеке ытларах вулама тăрăшатăп: фантастика жанрĕнчи хайлавсене, классика литературине… – кăмăллăн калаçать вăл.

Мĕнле ĕмĕтпе çунатланать-ха шкул маттурĕ? Лена малалла медицина енĕпе вĕренме кайма, çĕршыва кирлĕ çын пулса çитĕнме тĕллев лартнă. Шухăшланине пурнăçа кĕртес тесен çанă тавăрса тăрăшмаллине лайăх ăнланать.

Кăмăллă пикен юлташ та чылай. Тантăшĕсемпе пĕр чĕлхе çăмăллăнах тупаканскер ыттисенче ырă кăмăллăха, шанчăклăха, тӳрĕ кăмăллăха хаклать.

– Туссенчен яланах мĕн те пулин çĕннине вĕренетĕп, пĕлетĕп. Эпĕ юлташсене кура хăюллăрах пулма хăнăхатăп. Вĕсем мана хавхалантарма пĕлеççĕ, сĕнӳ-канашпа пулăшаççĕ. Чăн-чăн туссен çавăн пек пулмалла та, – çирĕплетрĕ Лена сăмахне вĕçленĕ май.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Хĕрлĕ Чутай шкулĕ.

# «Мĕн туйнине çырмалла»

Чăваш композиторĕн Николай Карлинăн юбилейне халалласа Чăваш наци библиотекинче «Сан ятупа мăнаçланатпăр» пултарулăх каçĕ йĕркелерĕç. Тĕлпулăва хисеплĕ хăнасем пуçтарăнчĕç тата, паллах, Николай Сергеевича ырми-канми ĕçĕшĕн тав туса, «Çĕршыва савса юрлатăп» конкурсра çĕнтернĕшĕн дипломпа чысларĕç.

Николай Сергеевич Карлин 1946 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă. Педагог, композитор. 1974 çулта ăна Чăваш Енри композиторсен ассоциацине йышăннă, 1982 çулта «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятпа чысланă. 1985-2000 çулсенче – «Пикесем» халăх хорĕн ертӳçи. 2000 çултанпа Самар облаçĕнче ĕçлет. «Асамат» халăх хорне, «Путене» чăваш ача-пăча ансамбльне ертсе пырать. Нумай юрă авторĕ.

Николай Карлинăн пултарулăх каçĕнче хисеплĕ хăнасем нумай ырă сăмах каларĕç, юрăçсем композитор кĕвĕленĕ юрăсене шăрантарса савăнтарчĕç.

Николай Сергеевич кĕвĕ кăна мар, сăвă та çырать. Рифма тата ритм вăрттăнлăхне тин кăна алла илекенсене питĕ лайăх сĕнӳ пачĕ вăл:

– «Мĕн çырас-ши?» – тесе пуçа хыçса шухăшламасăр, мĕн туйнине тата курнине çырмалла.

Чăнах та, чун-чĕререн тухакан йĕркесем кăна хăйсен пурнăçĕпе пурăнайĕç-çке. Ачасене шăпах çакна ăса хывма сĕнет нумаях пулмасть «Раны войны» поэмине вĕçленĕскер.

– Унăн сăввисенче çăмăлттайлăх çук, тарăн шухăш кăна, – тесе хакларĕ Н.Карлин хайлавĕсене Н.Малышкин, Елчĕк ентешлĕхĕн ертӳçи.

Юрий Кудаков композитор та нумай ырă сăмах каларĕ.

«Паянхи тĕлпулу чăваш халăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ», – палăртрĕ вăл.

Пултаруллă çын пур енчен те пултаруллă теççĕ. Сăмахсен чăнлăхĕ куçкĕретех. Пĕр ĕçе пурнăçласан теприне тума та хавхаланатăн. Асăннă тĕлпулура эпир Николай Сергеевич Карлин композитор çинчен нумай çĕннине пĕлтĕмĕр. Тавтапуç ăна халăха нумай илемлĕ, манăçми юрă парнеленĕшĕн!

*Лариса ПЕТРОВА.*

➲➲➲ 1-мĕш стр.

Вăйлă çил тӳпери пĕлĕтсене каллĕ-маллĕ хăвалана вăхăтра кичем ачасене. Ара, урамра чупма, шыва кĕме чарать-çке! Çыран хĕрринчи курăк та сивĕ, унта канлĕн выртма мар, пусас та килмест ун çине çарран. Çумăр çăвать тăтăшах. Чим, ăçта пытаннă-ши ачасен тусĕ – хĕвел? Каникула кайнă çамрăксен пуçĕсем усăннă, ним патне ал-ура çыпçăнмасть-çке çакнашкал çанталăкра.

Анчах Кăкшăм шкулĕнчи сывлăхпа кану лагерьне çӳрекенсене кунашкал вăхăт пĕрре те пăшăрхантармарĕ. Пурнăç хаваслă чухне кун иртни сисĕнмерĕ. Мĕнле кăна вăйă вылямарĕç-ши! Мĕн чухлĕ уяв ирттермерĕç-ши? Кашни хăй хастарлăхне кăтартса пачĕ. Чăн та, пурте пултаруллă. Пĕри юрлама маттур, тепри – ташлама, виççĕмĕшĕ – ӳкерме е мĕн те пулин ăсталама.

Авă лагерь ертӳçи Надежда Николаевна Иванова вĕренекенсен тавра-курăмĕ аталантăр тесе тĕрлĕ япала тума вĕрентет. Тĕслĕ хутсенчен, канфетсенчен чечек çыххи ăсталаттарни те ачасен кăмăлне çĕклентерчĕ. Вĕрен явма вĕренсен те хĕпĕртерĕç сатурсем. Ара, вĕрен-тавраш ялта кашни утăмрах кирлĕ-çке. Пăру кăкарма, кашта тума, лав çыхма – таçта та усă курмалли хатĕр-çке вăл.

Пĕр кунхине вара сарă хĕвел аса илчĕ пулас шавлă ачасене. Вăл çутăлса тухрĕ те шкул чӳречисенчен йăлтăртаттарса пăхрĕ. Хăй шевлине лагерьти ачасен питкуçĕ çине ачашшăн сапаларĕ. Капла кам савăнмĕ чунтан? Хаваслă ачасем хыпаланса урама чупса та тухрĕç.



# Çуткасси, Мăчкаш... Эпир пурте хурăнташ

– Мĕн тери лайăх! Уçă сывлăшра ытларах та сиккелес, чупкалас, кулас килет! – терĕç савăнăçлăскерсем.

Кашни куна усăллă та хаваслă ирттерессĕ Кăкшăмсем. Вырăссен паллă поэтне Александр Пушкина халлланă куна те асра юлмалла йĕркелерĕç. Сăвăсем каларĕç, унăн пурнăçне аса илчĕç. Хăйсен ентешне, чăваш халăх писательне Леонид Агакова та сума сурĕç. Вăл çуралнă Çуткассине те çитрĕ хаваслă ушкăн. Çыравçă пурăннă урампа утрĕ, çурт ларнă тĕлте чарăнса пултарулăхĕ пирки калаçрĕç. Вăл çырнă произведенисене тишкерчĕç. «Партизан Мурат» хайлавĕнчи хурарах сăнлă, чăп-чăмăр питлĕ, пысăк куçлă вунтăваттăри паттăр Мурат Коршунова аса илчĕç.

– Пирĕн çулти арçын ача вăрçă вăхăтĕнче тертнушине чылай тӳснĕ-çке... Леонид Агаков çырнă йĕркесене куççульсĕр вулама çук... Яла нимĕçсем кĕрсен чылайăшĕ партизан отрядне кайса паттăрла ĕçсем тунă. Пĕр çĕрте фашистсен поездне çырмана сиктернĕ, тепĕр çĕрте çул тăрăх пыракан автомашинăсене тапăннă, салтакĕсене тĕп тунă. Пурлăхĕсене туртса илнĕ, – терĕç кĕнеке вулама юратакан хĕрачасем.

Арçын ачасен те каламалли тупăнсах пычĕ.

– Мурат партизансен ушкăнне лекме ĕмĕтленни пирки те мĕн тери сăнарлă çырнă писатель. «Эх, çавăн пек отряда лекесчĕ! – шухăшланă Мурат. – Алла пăшал тытасчĕ те кашни кун, кашни утăмра шаккасчĕ фашиста! Хĕнесе вĕлернĕ аннешĕн те, хама асаплантарнăшăн та, персе пăрахнă Якур мучишĕн те тавăрасчĕ. Эх, Якур мучин ытармалла мар халапĕсене урăх никам та илтеймĕ. Урнă йытăсем! Отряда лексен нимĕн чухлĕ хăрамăттăм, пĕр тумлам вăй юлмиччен çапăçăттăм», – тет вăл чышкисене чăмăртаса. Çапах унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрет. Партизансен отрядне лексе паттăрла ĕçсем тăвать вăл. Эпир те ӳссен Мурат пекех Тăван çĕршыва юрăхлă çынсем пуласшăн, – терĕç юлашкинчен арçын ачасем пĕр харăссăн.

...Мăчкаш юханшывĕ... Ахаль чухне унти хитрелĕхе сăнаман та-и, тен, ачасем, ушкăнпа похода кайсан çут çанталăк нихăçанхинчен те хитререх курăнчĕ вĕсене.

– Пăхсамăр, юханшыв урлă кайăксем ăмăртмалла вĕçеççĕ!

– Тавралăхăн симĕс те илемлĕ тумĕ пире похода каймa татах та чĕннине сисетĕр-и, туссем!

– Мĕн тери аван çутçанталăкра, шкулта парта хушшинче ларни мар! Чун каниччен уçăлса çӳреме пит шеп.

Пĕр-пĕрне пӳлсе шавларĕ те шавларĕ хаваслă ушкăн. Вылярĕç, савăнчĕç, кулчĕç. Хуранта ташласа пиçнĕ апат вара пурне те килĕшрĕ.

– Ах, мĕн тери тутлă, техĕмлĕ. Чĕлхе анса кайма та пултарать капла! – терĕç савăнса.

– Çапла çав, ачасем. Çутçанталăкра пĕçернĕ апатăн та, вĕретнĕ чейĕн те тути урăхла, – ăнлантарчĕç воспитательсем хастарсене.

## Истори страницине уççан...

Кăкшăм шкулĕнче пуян музей пур. Тем те упранать унта. Ĕлĕкхи тум-юм, хуçалăхра кирлĕ япаласем... Ялти хастар çынсен сăн ӳкерчĕкĕсем те вырăн тупнă. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе паллашма та пулать. Шкула хăнасем килсен кунта кĕрсе тухмасăр каймаççĕ. «Лайăх музей, пуян. Тăван çĕршывшăн паттăррăн кĕрешсе пуçĕсене хунă çамрăк салтаксен шăпи кулянтарать ытларах. Вĕсене асра тытса пĕр кĕтес туни – калама çук пысăк ĕç. Ан тив, килес ăру та çав паттăрсене асра тыттăр», – теççĕ.

Лагерь ачисем те кашни кун кĕреççĕ музея. Экскурсовод вара сăмах çăмхиневаскамасăр сӳтме тытăнать.

Акă Тăван çĕршывшăн вăйне, пурнăçне шеллемен паттăрсем...

**Агафья Лукинична Лукина...** Чăнах, унăн шăпи пурне те пăшăрхантарать, чуна çӳçентерет. Вăрçăра связист пулнă вăл. Паттăрлăхĕпе пĕрре мар палăрнă. Мăшăрĕ ирсĕр тăшмана пула ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă. Вăрçă хыççăн пĕчченех таврăннă тăван тăрăхне. Кунта та телейĕ унран айккинчен пăрăнса иртнĕ. Вербовкăпа Мускава ĕçлеме янă ăна. Агафья пĕчĕк ачине тă хăйĕнчен хăварман. Инçе çула юратнă пепкипе тухса кайнă. Пĕррехинче лавккара ывăлне çухатнă вăл. Çук, тем пек макăрса шырасан та – тупайман тĕпренчĕкне. «Турă çырлахтăрах! Йĕп мар-çке вăл... Çак самантра ăçта кайса кĕме пултартăр? Вăрласа кайрĕç-ши? Юратнă мăшăрăма аса илтерекенни те вăл çеçчĕ-çке» – ниепле те лăпланса хăйне алла илеймен хĕрарăм.

Вăхăт иртсен яла ывăлĕсĕр таврăннă вăл. Çук, ниепле те пепкине манайман. Урамра хаваслăн чупса çӳрекен ачасене куççуль витĕр пăхнă. Çулсем иртнĕ, тепре качча кайнă Агафья. Шел, Турри ача парнелемен çамрăк çемьене. Хĕрарăмăн чунĕ вара çаплипех йĕппе чикнĕн ыратнă. Кашни ачара çухалнă ывăлне курнă. «Ку таранччен çитĕнсе каччă пулчĕ ахăртнех. Ячĕ çавах-ши? Паян кама, ăçти хĕрарăма ыталаса: «Анне!» – тесе чĕнет-ши? Е таçта нуша курса çӳрет? Тăван амăшĕ уншăн епле кулянннине чунĕ сисет-ши тата пĕрех хутчен?» – тесе часчас куççульне ирĕке янă. Юлашки сывлăш тухнă чухне те тĕпренчĕкнех аса илнĕ, аса илнĕ те... ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă.

...1941 çулхине арçынсем вăрçа кайсан ял хуçалăх техникумĕнчен ăнăçлă вĕренсе тухнă **Серафима Ильинична Петрухинăна** колхоз председательне лартнă. Фронта халăхпа тĕрлĕ япала ăсатнă вĕсем. Анчах пике ăшĕ лăпланман. «Вут-çулăм уйне манăн та каймалла!» – тенĕ çирĕппĕн.

Санитарка чылай салтак пурнăçне çăлнă. Çĕнтерӳпе киле таврăннă вăл. Шел, шăллĕн **Василий Ильичăн** шăпи урăхларах килсе тухнă. 1944 çулхине унран тăванĕсем сăвăлла юлашки çырăвне илнĕ.

«Эп çуралнă Уйкас ялĕнче,
Çитĕннĕ атте шурă пӳртĕнче.
Çитĕнтĕм, çитрĕм 18 çула,
Уйрăлтăм эпĕ юратнă тăвансенчен.

Ку сăвва çыратăп уйрăлас кунсенче,
Уйрăлатăп, юратнă тăвансем.
Тек кураймăп сире ĕмĕрте,
Тен, эсир те манăр мана.

Анчах та хушатăп ĕмĕр асăнма,
Хăвăр мĕскĕн ывăлăра Васяна.
Ун чухне ман чĕрене, тен, тивĕ тăхлан,
Ун чухне юлăп катари çĕршывра.

Тăвансем те пĕлмĕç мана ăçтине,
Кайăксем йăтĕç шăммăм-шаккăма.
Çак сăввăма эпĕ çыратăп,
Чĕрем çулăмпа çуннă вăхăтра.

Анчах та сăввăма вĕçлетĕп...
Икĕ куçăм куççульпе тулнипе...

*Сирĕн ывăлăр – ВАСЯ.*

**Иван Семенович Пчелкинăн** юлашки кĕске çырăвĕ те чуна йĕппе шăтарнăн ыраттарать. Хăй вилĕмне сиснĕ вăл, унсăрăн çакăн пек йĕркесем шăрçаламан пулĕччĕ. «Юратнă Аннăпа ачамсем! Мĕнле пурнăççем? Ĕнер вăйлă вут пулчĕ. Пĕччен сывă юлтăм... Таса пулсан тата çыру ярăп-ха та, çапах та ырă мар хут кĕтсе тăрăр. Вăрçăра тем те сиксе тухма пултарать-çке. Сирĕн çырăвăра илтĕм, пысăк тав!»

Хыпарсăр çухалнă салтак пирки 1947 çулхине Смоленск облаçĕнчи Гагарин хулинчен хыпар килнĕ. «Вăрçă вăхăтĕнче ку тăрăхра 400 кун хĕрӳ çапăçу пулнă. Иван Семенович Пчелкин пирки пĕлтĕмĕр. Унăн тата ытти салтаксен шăммисене лаша кĕреплисемпе аран пуçтарса пĕтертĕмĕр», – тенĕ унта.

**Степан Моисеевич Моисеев** танкист Орел пĕккинчи хĕрӳ çапăçура пулнă. Берлина çитиччен унăн танкне нимĕçсем сакăр хутчен вут тивертнĕ. Çапах сывă юлнă. Тăван яла таврăнсан тӳрех бульдозер çине ларнă та паттăр салтак, мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен çавăн йышши техникăпа ĕçленĕ. «Бульдозер танк пекех туйăнатчĕ мана», – тенĕ вăл малтанхи çулсенче.

Кăкшăм ялĕн историйĕ те ачасене куççуль кăларттарать. 1955 çулхине, аслисем уйра чухне, ялта пушар тухнă.

– Кăкшăм çунать! Кăкшăм çуна-а-ать! – тесе халăх лашасем çине ларса ялалла вĕçтернĕ.

Шел, пĕр вăрăм урамăн улăм витнĕ çурчĕсем куç умĕнчех кĕл купине çаврăннă. Никам та нимĕн те илсе тухайман. Çурт-йĕрсĕр юлнисем çĕр çинче йăваланса макăрнă.

Пушар сăлтавĕ – ачасем шăрпăкпа ашкăннинче. Вĕсем килте никам та çуккипе усă курса улăм купи çинче çăмарта пĕçерме шухăшланă. Ĕç-пуç вара пачах урăхла сиксе тухнă. Типĕ улăма çулăм çиçĕмле хăвăртлăхпа тивсе илнĕ те çуртсем çине сиксе ӳкнĕ. Хăранă ачасем унталла та кунталла тарса пытаннă. Ку хăрушă ĕç пирки Кăкшăм шкулĕнчи кашни ача пĕлет.

– Шăрпăкпа, электричествăпа питĕ асăрханмалла, унсăрăн инкек курасси куç умĕнче, – теççĕ ачасем.

...Лагерьти кану кунĕсем малаллах тăсăлаççĕха. Палăртса хунă тĕллевĕсем кашни кунах пурнăçа кĕреççĕ, юлнисем те çапла хаваслăн ирттессе туйсах тăраççĕ арçын ачасемпе хĕрачасем.

...Кунĕ аван паян. Çăмăлттай çил йывăç çулçисемпе вылякалать, кайăксем пĕрин хыççăн тепри кăвак тӳпенелле вĕççе хăйсен чĕлхисемпе чĕвĕлтетеççĕ. «Лагерь кунĕсене ăнăçлă вĕçлĕр!» – тенĕн чĕвĕлтетрĕç те, чĕвĕлтетрĕç.

*Элиза ВАЛАНС.*

Етĕрне районĕ,
Кăкшăм.

ШĂПА

# Юлташа юратрăм

Данилпа эпĕ «Контактра» сайтра паллашрăм. Вăл ман пата пĕрремĕш çырса ячĕ. Унччен эпĕ арçын ачасемпе питех хутшăнмастăмччĕ. Кунта вара унăн сăнне палласа илтĕм те юлташ пулма янă заявкине йышăнтăм. Малалла пирĕн хутшăну питĕ лайăх аталанчĕ. Манăн шухăшпа, эпир чуна уçсах калаçаттăмăр.

Кайран вăл мана уçăлса çÿреме чĕнчĕ. Нихçанхинчен урăхла туйрăм хама çавăн чухне, анчах Данила юлташ пек кăна йышăнтăм. Хутшăну малалла тăсăлчĕ. Пĕр-пĕрне çĕнĕрен те çĕнĕ сăнÿкерчĕксем ярса параттăмăр. Вăл шыва кĕме те чĕннĕччĕ, анчах эпĕ хирĕçлерĕм. Кайран вара унăн хĕр тупăннине пĕлтĕм, чунтанах савăнтăм. Анчах çак кунтанпа вăл улшăнчĕ. Эпир сахалрах хутшăнма пуçларăмăр, пĕрле уçăлса çÿреме пăрахрăмăр – мĕншĕнне ăнланма пултарайман.



Вăхăт иртсен эпĕ Данила юратнине туйса илтĕм, çакăн çинчен ăна пĕлтертĕм. Вăл юлташсем пулса юлар терĕ. Тата кăштах хутшăнкаласан: «Манăн санпа тек калаçас килмест», – тесе çырса ячĕ. Ним шухăшлама пĕлмерĕм. Анчах мĕнкăмăллăх вăй илчĕ те: «Питĕ аван», – тесе çырса ятăм.

Чылай вăхăт манма тăрăшрăм ăна. Çулталăк иртрĕ, туйăмсем лăпланчĕç темелле, анчах кÿренÿ юлчĕ. Пĕр япала калама маннă-ха эпĕ: вăл манпа пĕр класра, анчах тепĕр ушкăнра вĕренет. Çавăнпа ăна кашни кунах курма тивет.

Халĕ вара çапла хыпар илтрĕм: çитес вĕренÿ çулĕнче, 10-мĕш класра, Данил манăн ушкăна куçасшăн. Мĕнпе сыхăннă-ши ку, пĕлместĕп. Мĕнле пулмалла-ши манăн? Туйăмсем пĕрех тĕппипе сÿнсе çитмен-çке. Вулакансем, сĕнÿ парăр-ха, тархасшăн.

**ЮЛЯ.**

ЧУНРИ

# Турă çырни

Айванла юратрăм! Улттăмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра пулчĕ ку. Пирĕн шкула пĕр арçын ача килчĕ, Вăл çиччĕмĕш класра вĕренме тытăнчĕ. Богдан ятлă. Пи-и-итĕ илемлĕскер. Унпа пĕр класра вĕренекенсем вăл ăслах марри çинчен калаççĕ. Анчах маншăн вăл чи ăсли, чи лайăххи!!!

Çав арçын ачана килĕштерни çинчен хамăн чи çывăх юлташа каласа патăм. Вăл унран инçех мар пурăнатчĕ. Тусăма чун варлин телефон номерне тупса пама ыйтрăм. Çав ухмах хĕрача вара мĕн тунине пĕлетĕр-и? Мана килĕшекен арçын ачан чи çывăх тусĕ /манпа пĕр класра вĕренекенскер/ патне пынă та тÿррĕнех çапла каланă: «Богданăн номерне пар-ха, Диана ăна юратса пăрахнă!!!» Çывăх тусĕ вара çакăн çинчен пĕтĕм класа каласа панă, Богдан класне те пĕлтернĕ. Пурте йăлтах пĕлчĕç…

Эпĕ ăна пуçа çухатмалла юрататăп-çке!!! Чăтаймастăп урăх! Пулăшăр-ха, тархасшăн, ăна килĕшес тесен мĕн тумалла-ши? Эпĕ унпа пĕр арçын ача урлă калаçнăччĕ. «Санпа тĕл пулма хатĕр мар-ха. Хăратăп, çыртма пултаратăп», – тенĕ вăл, паллах, шÿтлесе. Çапларах манăн ĕçсем.

Тархасшăн, сĕнÿ парăр-ха! Унччен эпĕ никама та çакăн пек юратса курман… Чăн та… Вăл манăн пĕрремĕш юрату…

**ДИАНА.**



КĔНЕКЕРИ ЙĔРКЕСЕМ

* * *

Натали – пĕлтĕртенпе хăвăрт ÿссе кайнă çинçе пÿллĕ хĕрача, – курăмлисенчен пĕри. Асăрхакаланă-ха Леша, вĕсен параллельлĕ класĕнче вĕренсе пыраканскерне асăраххисем те куç хываççĕ, тăхтавсенче ун тавра явăнаççĕ, шкултан тавраннă чухне те ун çумне çыпăçасшăн. Кулли те унăн ытти хĕрачасенни пек мар, темĕнле çепĕçреххĕн, такама шаннăн тата çав ачашăн кăна янăранă пекрех илтĕнет. Çав çепĕçреххĕн янăракан кулла Лешăн юлашки вăхăтра час-часах илтес килме пуçларĕ. Тĕлĕнмелле, пĕлтĕр арçын ача Наталипе юнашар та утса курманччĕ, учитель параллельлĕ класра математикăна питĕ лайăх вĕренекен хĕрача пурри çинчен асăнкаланине çеç илтнĕ. Леша ку предметпа «пиллĕкçĕр» пуçне нимĕнле паллă та илсе курман, çавăнпа учитель сăмахĕсем унăн хăлхине кĕрсех те вырнаçман. Наталие хăйне паллать-ха вăл, пĕлтĕр лешĕ ытти хĕрачасенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмастчĕ: вăтам пÿллĕ, çинçерех мăйлă, пăртак вăрăмрах уралă. Кивĕ кĕске пиншакĕ чĕркуççийĕсене аран çеç пытарать. Кăçал вара!.. Мĕн пулнă çуллахи каникулта Наталие?

*/Г.Краснов «Хĕрлĕ тюльпан»/.*

* * *

Эпĕ, Саламов Петĕр, яланах çынсем мана йăнăш ăнланасран хăраттăм. Ытла нумай кĕтсе ним те кĕтсе илеймесрен. Укĕнмелле пуласран. Çавăнпа эпĕ е куç тĕлне пулмасăр çÿреме тăрăшнă, е тÿрех шăрта тăратнă.

*/Хв.Уяр «Ăçта эс, тинĕс?»/*

* * *

Салампи сăнĕнче, сассинче, куллинче ачалла тÿрĕ кăмăллăх, айăпсăрлăх, хĕрле тасалăх, именчĕклĕх, хĕрарăмла çепĕçлĕх, ачашлăх сисĕнсе тăрать; ун çине пăхнăçемĕн хăвăн та ырă, илемлĕ пулас килсе каять, вара, чăнах та, ху ырă та илемлĕ пулнине чун-чĕрÿпе туйма пуçлатăн; вăл ялкăшса кулса ярсан эсĕ те кулмасăр чăтаймăн, вăл хурланса макăрас пулсан эсĕ те чунна хытарса тăраймăн; сан ăна юрама темле пысăк ĕç, мухтавлă ĕç тăвас килет; сана унăн сăнĕнче ху сăнна курнăн туйăнать, унăн телейĕ сана та савăнтарать, унăн хурлăхĕ сана та хурлантарать, унăн намăсĕ сана та хĕретет – шăпах çапла туйăмпа юратать те ăна Коля, Валери шăллĕ.

*/А.Артемьев «Салампи»/.*

●КУН КĔНЕКИНЧЕН

* * *

Çумăр – манăн юратнă çут çанталăк вăхăчĕ. Вăл тĕрлĕрен пулать: вăйлă, хăватлă, аслатиллĕ тата çиçĕмлĕ – Зевс турă çĕре темшĕн асаплантарасшăн тейĕн. Хăш чухне вара вăл ăшă, çепĕç пулать, пире чăтмалла мар шăрăхран çăлать. Чунра лăпкă пулса каять ун чухне, пĕтĕм чĕре хури тасалса тухать тейĕн. Пурнăçри телейĕ самантсене аса илсе макăрас килет. Чĕречерен пăхса ларатăн кăна. Урамра вара айванкка çынсем çумăртан сунчăк айĕнче е ытти хÿтĕ вырăнта пытанма хăтланаççĕ. Эх, ăнланмаççĕ вĕсем нимĕн те… Çумăр вăл – эпир кÿрентернĕ, тахçанах пирĕнтен уйрăлнă çынсен куççуль тумламĕсем. Хăйсем çинчен аса илтерсе йĕреççĕ вĕсем. Çав тумламсем пит, кĕлетке çине ÿксе ачашланăнах туйăнаççĕ. «Çумăр айĕнче тăрсан чирлесе ÿкетĕн те вилетĕн», – тесе ахалех калаççĕ. Хытă чĕреллĕ çынсен чунĕсем кăна вилеççĕ. Шăпа вĕсене çапла явап тыттарать. Ырă çынсем вара усаллăхран çăлăнаççĕ кăна.

Çумăрта мĕн чухлĕ вăрттăнлăх, ăнланманлăх, романтика тата юрату. Вăл пире вăй, шанăç, уçăлăх тата çĕнĕ пурнăç парать. Çумăр хыççăн кайăксем те юрлаççĕ, чечексем те çеçке çураççĕ, лупашкасенче çерçисем савăнса çÿреççĕ.

Шел, çынсем çумăр пĕлтерĕшне ăнланмаççĕ. Вĕсем ним шухăшсăрах сывлăша хуратаççĕ, çапла вара çумăра та, хăйсене те наркăмăшлаççĕ…

**УЛЬЯНА, 15 çулта.**



* * *

Хĕрсем! Хамăн шухăша сирĕнпе пайлас килет.

Юлашки вăхăтра философипе интересленме тытăнтăм. Мана питĕ кăсăклантарса ячĕ çакă. Хама ăслăрах пек туйма пуçларăм темелле-ши… Анчах тепĕр енчен пăхсан, эпĕ хама ытлашшипех тĕпчетĕп пек, ку вара лайăххах та мар. Халĕ çакна çыратăп та: «Хăвна мĕн тĕпчемелли пур ĕнтĕ? Ноутбукна сÿнтер те кайса ĕçле, аçу-аннÿне пулăш», – тесе шухăшлатăп. Анчах пурпĕрех çыратăп…

Мĕншĕн апат çиетĕп-ши эпĕ? Пурнăç валли нумай та кирлĕ мар-çке. Манăн хĕр тантăшсенчен чылайăшĕ манран та ытларах апатланать, анчах пĕри те самăрланмасть-çке… Юрĕ, манăн вар-хырăм япăх ĕçлет тейĕпĕр. Анчах мĕншĕн эпĕ çавăн пек нумай çиетĕп-ши??? Çапла, манăн пушă вăхăт ытлашшипех пуль çав. Шкултан киле ĕç ахаль те нумай параççĕха, анчах вĕсем мана питех кăсăклантармаççĕ. Тен, манăн чун киленĕçĕ тупмалла? Анчах мĕнлине-ши? Пианино калас-и? Эпир ăна тахçанах сутса янă. Кĕнеке вулас-и? Чăтăмлăх çитмест. Тен, çыхасси-тĕрлессипе аппаланма пуçламалла? Унта укçа кирлĕ-ха /чăн та, апат çиме те укçа кирлĕ/. Тата ку ĕç вăхăтĕнче эпĕ нумай шухăшлама тытăнăп. Ташламалла-ши? Анчах эпĕ хамăн кĕлеткерен вăтанатăп…

Хĕрсем, мĕн шухăшлатăр-ха эсир кун пирки? Çырса пĕлтерĕр-ха, тарха-а-асшăн! Тен, эсир мана наян тетĕр. Юрĕ. Анчах çакăн пирки çырса пĕлтерсемĕр. Мĕншĕн çапла шухăшланине те ăнлантарăр.

Манăн хама лайăххах ăнланас килет…

**МАША, 16 çулта.**

● ХАМĂР ХУШĂРА

# Çěрě пурнăçа улăштараять-и?



Çěрě хăш алăра тата пўрнере пулнинчен çын пирки чылай пěлме май пур иккен. Ытларах çěрре сылтăм алă пўрнисенче асăрхатпăр. Çакă çын пурнăçра çитěнў тума ăнтăлнине пěлтерет. Чылайăшне капăрлăха хăш пўрнене тăхăнасси кăсăклантарать. Чи малтанах ăна пурнăçри çитменлěхсене лайăхлатмаллипе, хамăрта пěр-пěр япалана улăштарассипе шайлаштармалла. Сăмахран, пуç пўрнене илер. Вăл – шухăшлава тата тěрлě лару-тăрăва тěрěс йěркелессипе çыхăннă. Характерта çак паллăсем çитмесен çěрре шăпах пуç пўрнене тăхăнма сěнеççě. Ку организмри вăй-хала кирлě пек шайлаштарма пулăшě. Тўрех икě алăри пысăк пўрнене те çěрě тăхăнма юрамасть. Çын япăх витěм кўрекен лару-тăрăва кěрсе ўкě, вěсенчен хăтăлаймě.

Шěвěр пўрнене çěрě тăхăнма пачах та сěнмеççě. Вăл чунри япăх шухăш-кăмăлпа çыхăннă. Вěчěрхентерекен е тарăхтаракан япалана шăпах çак пўрнепе тěллесе кăтартатпăр-çке. Шěвěр пўрнене кěмěл çěрě тăхăнакансем шалти усал шухăшсенчен хăтăласшăн. Çак пўрнери ылтăн çěрě вара кăткăс лару-тăруран тухма пулăшě. Анчах та унпа чылай вăхăт çўреме юрамасть, ěç-пуç йěркеленсенех çěрре хывăр.

Капăрлăха вăтам пўрнене тăхăнни çын шăпари кěтмен улшăнусемпе пурнăçри ăнсăрт самантсенчен шикленменнине пěлтерет. Ылтăн çěрě çак туйăма вăйлатать, кěмěл – çемçетет.

Ятсăр пўрне юратупа тата хутшăнупа çыхăннă ěçсемшěн «явап-лă». Хăйсен çуррине тěл пулнă, ăшă та çутă туйăмсене пурнăç тăршшěпех упраса хăварас текенсем сылтăм алăри ятсăр пўрнене çěрě тăхăнаççě.

Кача пўрнене кам çěрě тăхăнать-ха? Сулахай алăри çак пўрнене ытларах манахсем çěрěпе капăрлатаççě. Укçа-тенкěпе çыхăннă ěçе лайăхлатас тесен вара сылтăм алăри кача пўрнене хаклă металран хатěрленě, хěрлě чулпа капăрлатнă çěрě тăхăнмалла тет.

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Чăх какайěпе ананас салачě



**Салат валли:**
**200 грамм пěçернě чăх какайě,**
**çавăн чухлех консервланă ананас,**
**70 грамм хытă сыр,**
**Ыхран 1-2 шăлě,**
**30 грамм хуппинчен тасатнă аçтăрхан мăйăрě,**
**2 çăмарта,**
**кăштах тăварпа майонез,**
**темиçе тарталетка кирлě.**

Какая пысăках мар татăксене, ананаса тăваткалласа ваклăр. Сыра шултăра теркăпа хырăр. Çăмартапа мăйăра, ыхрана вěтетěр. Мăйăрсăр пусне пур çимěçе те майонезпа тăвар хушса пăтратăр. Хатěр салата тарталеткăсене тултарăр. Çиеле вěтетнě мăйăр сапса илемлетěр.

## Шăккалатпа хăйма торчě

**Чуста валли:**
**2 çăмарта,**
**1 стакан сахăр,**
**1 стакан хăйма,**
**2 чей кашăкě какао порошокě,**
**1 чей кашăкě апат соди,**
**1 стакан çăнăх,**
**кăштах тăвар кирлě.**
**Крем валли 1 стакан хăймапа çавăн чухлех сахăр кирлě.**

Чуста валли хатěрленě пур япалана та пěрлештерсе лайăх пăтратмалла. Формăна ярса 180 градус таран хěртнě духовкăна лартмалла. Хатěр коржа сивěннě хыççăн икке пайламалла. Аялти сий кăштах хулăнрах пулмалла.

Хăймапа сахăра лăкаса крем хатěрлемелле. Коржсене крем сěрсе пěр-пěрин çине вырнаçтармалла. Çиеле теркăланă шăккалат сапсан та юрать.

## Чăх какайěнчен хатěрленě кăлпасси

**Çимěç валли:**
**1 килограмм шăмминчен уйăрнă чăх какайě,**
**7-8 ыхра шăлě,**
**çур чей кашăкě вěтетнě хура пăрăç,**
**çавăн чухлех чăх какайне тутлăлантармалли специ /тăвар, паприка, сахăр, горчица вăрлăхě, куркума/,**
**2 кашăк майонез,**
**15 грамм желатин кирлě.**

Çунă какая типěтсе вăтам татăксене вакламалла та аш арманěпе авăртмалла. Хыççăн вěтетнě ыхра, пăрăç, специ, майонез, юлашкинчен желатин хушса лайăх пăтратмалла.

Хутăшран пысăках мар темиçе кăлпасси хатěрлемелле: ятарлă апат-çимěç пленкипе чěркемелле. Çиелтен вара – фольгапа. Вěçěсене канфет хучě евěр пěтěрсе çирěплетмелле.

Хатěр кăлпассине 180 градус таран хěртнě духовкăна хурса 1 сехет тытмалла. Пиçнě çимěçе сивěннě хыççăн сивěтмěше лартмалла. Тепěр кунне ăна тутанма юрать. Апачě тутлă пултăр!

● ИЛЕМ КĚТЕСĚ

# Ўте лайăхлатма çěпре пулăшать

Тěрлě витамин организмшăн çеç мар, ўтшěн те усăллă. Косметика хатěрěсенче В ушкăна кěрекен витаминсемпе анлăн усă кураççě. Вěсем ўте вăхăтсăр ватăласран упраççě. Çавăн пекех В витамин «ушкăнě» ўте якатма, нўрěклетме, ўт тěсне лайăхлатма пулăшать. Крем-маска валли вěсене çěпререн туса илеççě. Килте те çěпререн хатěрленě маскăсемпе усă курма юрать.

Çěпрепе кăштах олива çăвне хутăштарса янтăланă маска типě ўтшěн усăллă, темиçе тумлам лимон сěткенěпе пěрлештерни вара çуллă ўте аван витěм кўрет. Вěсем ўте якатаççě, усăлтараççě, çепěçлěхе упрама пулăшаççě.

Чěкеç шатрисем е пигмент пăнчисем тарăхтараççě-тěк çак маскăпа усă курăр: 2 кашăк çěпрене сěтпе е хăймапа тата 2-3 тумлам лимон сěткенěпе хутăштармалла. Çўхе сийпе пите сěрсе 10 минут тытмалла та ăшă шывпа çумалла.

● СЫВЛĂХ

## Усăллă чей



Китай ăсчахěсем палăртнă тăрăх чылай апат-çимěçпе танлаштарсан симěс чей усăллисенчен пěри шутланать. Вăл сывлăха çирěплетме тата кун-çула вăрăмлатма пулăшать. Çакна акă мěнле ăнлантармалла: симěс чее типěтсе хатěрленě чухне унра организма лайăх витěм кўрекен витаминсемпе минералсем чылай сыхланса юлаççě.

Симěс чейри усăллă япаласене Китай ял хуçалăх академийěн ăсчахě Чэн Цикун нумай вăхăт тишкернě, анализ тунă. Чейре С, Р, РР, К, В ушкăнри витаминсем чылай пулни палăрнă. Унсăр пуçне симěс чей фторпа, йодпа, цинкпа, калипе тата пăхăрпа пуян. Çак витаминпа минерал комплексě шалти органсен ěçне, уйрăмах вар-хырăма, пěверпе пўрене лайăх витěм кўрет. Япаласен ылмашăвне /метаболизм/ те хăвăртлатать.

Хальхи экологи лару-тăрăвне шута илсе ăсчахсем симěс чей ытларах ěçме сěнеççě.

## Сěнўсем

◆Хăш-пěр ată-пушмака тăхăннă хыççăн ура кěллине мозоль тухать. Ку пăтăрмахран хăтăлма пушмакăн шал енне, ўте сěртěнсе хытаракан тěле вазелин е çуллă крем сěрěр. Сăрхăнса пěтсен процедурăна тепěр хут тăвăр. Çак меслетпе сăран ată-пушмака çеç çемçетме пулать.

◆Пурçăн япала вараланчě-тěк пěр чěптěм тăварпа нашатырь спиртне хутăштарса таса мар тěле сăтăрăр.

◆Хěрлě тата сарă пăхăртан хатěрленě япаласене, графинпа кěленчесене уксуспа тăвар хутăшěпе тасатма юрать.

◆Хуппипе пěçернě пахчаçимěçе кăштах сивě шывра тытсан тасатма çăмăлрах пулать.

◆Çăм тумтирěн якалнă тěлěсене вěри уксуспа йěпетнě çěтěкпе сăтăрмалла.

◆Йодпа вараланнă япалана нашатырь спирчěпе тасатма пулать.

◆Нашатырь спирчě тумтир çинчи типнě çумăр тумламěсене те тасатма пулăшать.

ХАВАСЛĂ САМАНТ 2016

## Икĕ пуçватмăш




### «Аа» пуçватмăш

1. Медаллĕ-орденлĕ çын. 2. Пьесăра хушса ăнлантарса çырни. 3. Тĕнчипе паллă СССР тата Раççей балерини. 4. Кăнтăрти пĕчĕк кукăль. 5. Бразилири чи вăрăм юханшывсенчен пĕри. 6. Кирпĕч тĕсĕ. 7. Ăслăлăх ĕçĕ. 8. Пĕр артист концерчĕ. 9. И.Яковлев тата унăн вĕренекенĕсем хатĕрленĕ ăслăлăх хатĕрĕ. 10. Хăватлă карап. 11. Шкулти тĕрĕслев ĕçĕ. 12. Ăста гимнаст. 13. Усăлтаракан тутлă шыв. 14. Чăвашран тухнă паллă темиçе спортсменка хушамачĕ.

### «Уу» пуçватмăш

1. Тĕнчен çурçĕр пайĕнчи çăлтăр ушкăнĕ. 2. Ăслăлăх ĕçĕ. 3. Çĕршывăн чиккинчи учреждени. 4. Самолет пайĕ. 5. Енисей юханшыв çинчи тинĕс порчĕ. 6. Авалхи Турцири хресченсене панă çĕр лаптăкĕ. 7. Çар çыннин картусĕ çинчи паллă. 8. Чечек клумбин тĕсĕ. 9. Карапа ишме пулăшакан ытлашши тиев. 10. Сăвă тĕсĕ. 11. Тĕнчере çак минерал виçĕ пин ытла тĕслĕ. 12. Хĕç-пăшал е çынсăр хăйтĕллĕн ĕçлекен ăслай. 13. Музыкăри вăйлă тактран йăвашши çине куçни. 14. Апат-çимĕç хатĕрлекен ăстаçă.

## «К» сăмахкаçмăш




1. Юр хĕвсе тултарса лартнă хулăм сий. 2. Тĕн йăла-йĕркинчи вулакан сăмах. 3. Çипуç пайĕ. 4. Кăнтăрти çимĕç. 5. Шыв урлă каçмалли е ишмелли хатĕр. 6. Теннис «çурчĕ» тата ытти те. 7. Раççейри халăх. 8. Раççей çумне çыпçăннă çĕнĕ регион. 9. Греци утравĕ. 10. Малайзире, Индонезире усă куракан хĕç-пăшал, кинжал. 11. Çын ӳт-пĕвне сыхламалли е çĕнетмелли хатĕр. 12. Кавказри юханшыв. 13. Шыв карапĕ е самолет ишекен е вĕçекен çулĕ. 14. Чукун хатĕрленĕ чухне усă куракан топливо. 15. Музыка хайлавĕн хушма пайĕ. 16. Тинĕс пулли. 17. Тутлă çимĕç. 18. Атăл юппи. 19. Çамрăк вăрман. 20. Вест-Индири /Америка/ çĕршыв. 21. Утă-улăм капанĕ. 22. Нимĕçсен паллă философĕ. 23. Тутарстанри Тăхăрьялсенчен пĕри. 24. Хурт-кăпшанкă.

## Сăмахкаçмăш




**Сылтăмалла:** 1. П.Хусанкай поэми. 2. Шывра пурăнакан чĕрчун. 3. Йăлара кирлĕ япалана йывăçран та тата ытти металтан та хатĕрлеççĕ. 4. Çăкăр пĕçернĕ чухне çак тĕштырăран хатĕрленĕ çăнăхпа усă кураççĕ. 5. Вăл ял хыççăн çеç йĕркеленнĕ. 6. Чăваш поэчĕ, «Çăкăр» поэма авторĕ. 7. Ĕç хатĕрĕ. 8. Тĕс. 9. Йăлара усă куракан япала е шахмат фигури. 10. Доска çине çырмалли хатĕр. 11. Вĕçенкайăксен «пӳрчĕ». 12. Юханшывпа йывăççене юхтармалли хатĕр. 13. Çирĕп сăмах пани. 14. Азири пушхир. 15. Англири политикăна хутшăнакан пысăк титул. 16. Африкăри çĕршывăн тĕп хули. 17. Чăваш писателĕн, сатирикĕн Иван Мучин хушма ячĕ. 18. Паллă словарь авторĕ е паллă киноактер. 19. Пĕччен юрлакан музыка хайлавĕ. 20. Çар подразделенийĕ.

**Сулахаялла:** 1. Хăватлă çар техники. 2. Хĕçпăшал тавраша. 3. Авалхи чăвашсен йăла-йĕркере усă курнă апачĕ. 4. Раççейри герой хула. 5. Пĕр … хуçăлать, пин … хуçăлмасть /ват. сăм./. 6. Тĕс. 7. Ĕлĕк çитĕнтернĕ тулă тĕсĕ. 8. Сак айĕнче сар лаша кĕçенет /туп. юм./. 9. Шахмат фигури. 10. Пӳрт-çурт валли пĕренерен ăсталанă кăшкар. 11. Пирĕн вăрман пит чипер: /… ӳснĕ йывăççем/. М.Федоров «Арçури». 12. Организм пайĕ. 13. Çар хатĕрĕ. 14. Çĕр çине ӳкнĕ чи пысăк метеорит /Намиби/. 15. Попугай тĕсĕ. 16. Французсен паллă писательници. 17. Çĕпĕрти юханшыв, Витим юппи. 18. Испанецсен паллă ӳнерçи. 19. Нота. 20. Итальянецсен паллă çулçӳревçи.

## Пуçватмăш




**Гитара – тĕнчипе сарăлнă хĕлĕхлĕ музыка сăпрайĕ. 13-мĕш ĕмĕртех Испанире гитара ăста калама пĕлнĕ. Чăвашсен юрăçисем те ăна кăмăлласçĕ. Сăмахсене тĕрĕс вырнаçтарсан, гитара кӳлепинче концертсенче, эстрада уявĕсенче унпа усă курса юрлакан чăвашсен паллă юрăçин хушамачĕ вуланĕ.**

Аялалла: 1. Авалхи хĕç-пăшал. 2. Ăна «чун уççи» теççĕ. 3. Пир станĕн пайĕ. 4. Çулнă курăк. 5. Хими элеменчĕ. 6. Сĕт-турăх тавраша. 7. Йытă тĕнчине тĕпчекен. 8. Тăван çĕршыва хисеплекен, çĕклекен çын. 9. Панулми сорчĕ. 10. Тĕнчери пысăк утравсенчен пĕри.

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***